# АТТЕНЕ АСА ИЛНИ

Аттене эпĕ мĕн пĕчĕкренех астăватăп. Малтан, тен, ăна хăйне мар, унăн çепĕç те шанчăклă аллисене асра тытса юлнă, мĕншĕн тесен вĕсем лăпкăлăхпа канăçлăх, тутлă ыйхă кӳнĕ.

Çутă тĕнчене эпĕ килни аттепе аннене савăнтарнă, мĕншĕн тесен вĕсем унччен Яшенькăна, манăн пиччене, çухатнă. Вăл вăрçă тухас умĕн вилнĕ. Вăрçă пуçлансан атте хăй ирĕкĕпе фронта кайнă.

Киле вăл 1946 çулта таврăннă, тепĕр икĕ çултан эпĕ çуралнă. Вăйсăр та имшертерех пулнă эпĕ, час-часах макăрнă. Нихăшĕ те ним туса та лăплантарайманнине кура атте мана хăй аллине илетчĕ тет те улма-çырла пахчине тухатчĕ тет. Унта сехечĕ-сехечĕпе юрă юрласа çĕклесе çӳренĕ вăл мана, шăп эпĕ çывăрса кайиччен.

Каярахпа Леночка йăмăкăм çуралнă, унпа эпир пĕр-пĕринчен ниçта та уйрăлман, яланах пĕрле пулнă. Атте ялан ĕçлетчĕ, ман çемьен терт-нуша ан пултăр, ачасем сывлăхлă та ырлăхлă çынсем пулса ӳсчĕр тетчĕ.

Астăватăп, пĕррехинче эпĕ йывăр чирленĕччĕ. Нимĕн те çиес килместчĕ. Атте мана çапла каларĕ: «Эпĕ, Лĕля, халех калама çук тутлă яшка пĕçерĕп, вара эсĕ ăна çиеймесĕр ниепле те чăтаймăн», — терĕ. Унтан вăл мана пахчана илсе тухрĕ, чылайччен кирлĕ курăксем пуçтарса çӳрерĕмĕр, вăл вара вĕсене яшкана ячĕ. Кайран, яшки пиçсен, ăмăртмалла çирĕмĕр. Эпĕ хамăн яшкана унран маларах çисе ятăм. Çавăн хыççăн сывалма, вăй илме пуçларăм. Эпĕ сывалнă ятпа аттепе иксĕмĕре фотограф киле пырса карточка ӳкерчĕ. Унта эпĕ пукан çинче ларатăп, атте юнашар, чĕркуççи çинче тăрать.

Пирĕн Шарик ятлă йытă пурччĕ. Хура тĕслĕ те питĕ пысăкчĕ вăл, çăмламасчĕ. Кушакки вара Тутар ятлăччĕ. Вĕсем пирĕн мĕнпур вăйăсене тата походсене хутшăнатчĕç. Шарик питĕ вăйлăччĕ, атте ăна, сых ятне тенĕ пек, пире шывран туртса кăларма вĕрентнĕччĕ. Атте пирĕнпе шыва кĕнĕ чухне Шарикпе Тутар çыранта пăхса ларатчĕç, атте пыман чухне вара Шарик пирĕнпе пĕрлеччĕ —



Я.Г.Ухсай
Лёля ятлă
хĕр ачипе.
1948 ç.

анса каясран сыхлатчĕ, шывран турта-турта кăларатчĕ. Хамăра ишме мĕнле вĕрентнине астумастăп та эпĕ, шывра ишесси те, çĕр çинче утса-чупса çӳресси те маншăн пĕр пекех çăмăлччĕ. Вăл пире хистемен, ирĕксĕрлемен, анчах вĕренни-хăнăхни пурнăçра кирлĕ пулассине ĕнентерсе витерме пĕлнĕ.

Шарик пирĕнпе туслăччĕ, анчах пуринчен ытла аттене юрататчĕ, Тутар аттене чунтан парăннăччĕ. Атте ялти библиотекăна каять-и, уя-хире тухать-и, апат çиме таврăнать-и — Тутар яланах юнашарччĕ. Ĕçленĕ чухне атте чĕлĕм хытă туртатчĕ, çавăнпа та пирĕн кушакран та пĕрмаях чĕлĕм шăрши кĕретчĕ.

Хама социализм лагерĕнче мар, хăтлă кил-йышра усранăшăн эпĕ атте-аннене тав тăватăп. Шел пулин те, уйрăмлăхĕ питĕ пысăкчĕ атте-аннепе хăйсене педагог текен çынсем хушшинче. Пĕр килекен тĕслĕхсем питĕ сайраччĕ.

Йытăпа кушака вăл ĕçленĕ чухне те хăй пӳлĕмĕнчех юлма ирĕк паратчĕ, пирĕн вара унашкал ирĕк пулман.

Атте питĕ çирĕп кун йĕркипе пурăнатчĕ. Вăл хĕвелпе пĕрле тăрса уя тухатчĕ. Уйра юрласа утса çӳренĕçемĕн çĕнĕ сăвăсем хывнă. Вăл сăввăн тăват çĕр йĕрки таранччен асра тытнă.

Уйран килсенех вăл çыру сĕтелĕ хушшине ларатчĕ,

кăнтăрлахи апатчен ĕçлетчĕ. Апат вăхăтĕнче вăл эпир мĕнле çинипе интересленетчĕ.

Кăнтăрлахи апат хыççăн вăл малтан мĕн çырнине редакцилетчĕ, çĕнĕ сăвăсене чи малтан аннене вуласа паратчĕ. Анне, унăн пĕрремĕш вулаканĕ пулнă май, тимлĕн итлетчĕ, тĕплĕн хак паратчĕ.

Каçхине атте кĕнеке, беллетристика вулатчĕ. Ун хыççăн вара — тутлă та канлĕ ыйхă. Атте çĕрле нихăçан та ĕçлемен. Каçхи сăмах çине чăх сыснă тетчĕ вăл.

Ĕç вăхăтĕнчи тăхтавсенче атте пирĕнпеччĕ: тахçан, чупакансен ăмăртăвĕнче çĕнтернĕскер, вăл пирĕнпе ăмăртмалла чупатчĕ. Пĕрле лапталла вылятгăмăр, шыва кĕреттĕмĕр. Унашкал самантсенче анне калатчĕ: «Пирĕн хушăра чи кĕçĕнни — Якку», — тетчĕ.

Кăнтăрлахи апат хыççăн пире çывăрма вырттаратчĕç. Эпир вăраннă çĕре вăл ывăç тулли çырла е пан улми, е хăяр татса кĕретчĕ. Питĕ тутлăччĕ вăл татса кĕрекен çимĕçсем.

Çу пуçламăшĕнче вăл пире час-часах майра кĕпçипе хăналатчĕ. Хăй пире кĕпçе мĕнле усăллă пулни çинчен каласа паратчĕ, хуппине шуратса ларатчĕ, эпир вара тутлă курăка хĕпĕртесех çиеттĕмĕр.

Вăл пирĕн патран, анне пӳртĕнчен, мĕнле килнĕ çавăн пекех тухса каятчĕ. Эпир вăл ĕçлĕ пулнине ăнланаттăмăр, çавăнпа та ун патне кĕрсе чăрмантарман. Ĕçĕ кал-кал пынă чухне вăл пирĕнпе те, ыттисемпе те сахал калаçатчĕ. Ун пек чухне вĕсем кӳршĕре пурăнакан Çемук мучипе кăна кĕтӳ кĕртиччен калаçса ларатчĕç. Çемук мучипе арăмĕ хăйсен пӳрчĕ умне вырнаçатчĕç, атте вĕсем патне каçатчĕ. Юхатчĕ кăна вара шăкăл-шăкăл калаçу. «Хĕвел çине» сăвă шăпах çав мăшăр çинчен:

> Хĕвел çине старик те карчăк тухнă,
> Лараççĕ пĕрене çинче пĕрле.
> Вĕсем пĕрне-пĕри тупа та тунă,
> Савса чуптунă çамрăк чух çĕрле.
>
> Пĕр алă çул-тăр юрату хăвачĕ
> Вĕренĕ иккĕшин, паян та пур.
> Вĕсем çине пăхса, çап-çамрăк каччă,
> Çырман роман вула, телей те кур!

Каярахпа, арăмĕ чирлесе вилсен, Çемук пĕчченех тăрса юлчĕ. Атте ăна май килнĕ таран пулăшса пыратчĕ.

Атте Ленăпа иксĕмĕре, итлесех кайман пулин те, ятланине астумастăп эпĕ. Паллах, кăмăлсăрланни те пул-

ман мар унăн. Ун пек чухне вара пирĕнтен пăрăнатчĕ. Ку йĕрке ĕмĕрлĕхех сыхланса юлчĕ вара унăн.

Çак самантсем ялта пурăннă чухнехи пурнăçа аса илтереççĕ. Унта Лёля аппа пурăннă. Вăтăр çиччĕмĕш çулта, репресси алхаснă вăхăтра, упăшкасăр юлнă вăл, вăрçă тухсан пĕртен-пĕр ывăлне çухатнă. Вăл пирĕншĕн питĕ тăрăшнă.

Ача чухне аттене хулара сахал курнă. Манăн пурнăçра — шкул, балет, музыка пулнă. Вăл хĕлле те ялтах ĕçлетчĕ. Эпир ун патне каникул кунĕсенче кăна каяттăмăр. Шупашкарта чухне аттене, Лёля аппана, хамăр яла хытă тунсăхлаттăм. Çак тунсăх чуна хытă ыраттаратчĕ. Чирпе пĕрехчĕ вăл. Ача чухнехи çак пĕрремĕш ыратăва эпĕ яланах астăватăп.

Карача тухса кайнă чухне атте шӳтлĕ-мĕнлĕ Пушкина асилетчĕ: «Что напишешь в городе, разве что эпиграмму».

Карачра аттене ĕçлеме чăрмантаракан пĕр тăшман пурччĕ: ял Канашĕ çинчи кунĕпех кĕрлекен радио. Пирĕн кил унтан самаях аякраччĕ, анчах радио кĕрлевĕ пурпĕрех çитетчĕ. Çавăнпа атте хăйĕн пĕчĕк пӳртне сасă кĕмелле мар тĕплеме тăрăшатчĕ. Анне вилнĕ каç, трагеди каçĕ, атте нимĕн те илтменни çавăнтан килет те ĕнтĕ. Çырас ĕçре чун-чĕре вырăнта пулни, шăплăх та лăпкăлăх кирлĕ, Карачри лару-тăру аттешĕн шăпах çавăн пекчĕ. Хавхаланса ĕçлетчĕ атте. Вăл «пултарулăх командировкинчен» илсе таврăнакан çĕнĕ поэмăсене Шупашкар пачах пичетлеместчĕ. Çавна пула чылай хайлавсем малтан чăваш тулашĕнче, унтан тин хамăр патра тухатчĕç. «Ача чухнехи çăлтăрăм» поэма ярăмĕн шăпи шăпах çавăн пек пулчĕ.

Карач вăл, тепĕр тесен, хӳтлĕх вырăнĕ те. Унта атте совет системин хаярлăхĕпе кăнттамлăхĕнчен хӳтĕленетчĕ. Шупашкарта ăна куç вĕçертмесĕр сăнаса тăнă, унталла-кунталла пăрăнсан е выговор панă, е партбилет туртса илессипе хăратнă, е Писательсен союзĕнчен кăларма хăтланнă. Пичетлеме чарнă тĕслĕхсем те пулнă.

Шăпах пичетленес ирĕксĕр хăварнă вăхăтра аттене Мускавра РСФСР Патшалăх премийĕ памалла турĕç. Кунĕн те çĕрĕн кутăнла ĕçпе аппаланнă ун чухнехи тӳре-шара, Салтыков-Щедрин тĕнчинче пурăннă тӳре-шара.

Карачра — ем-ешĕл курăк, хура çĕр, шурă юр, сенкер тӳпе, сиплĕ шыв, тарават çынсем. Çут çанталăк кăмăлĕ уçă — вăл сăвăçа хăй ĕçне тума пур майпа та пулăшнă.

Кукаçисен çурчĕ — пысăк та хăтлăччĕ. Хуçи те — Лёля аппа — ăслă та интеллигентлă çынччĕ. Ахальтен мар ăна атте хăйĕн кĕнекисенчен пĕрине çапла çырса парнеле-

нĕччĕ: «Ольга Дмитриевнăна, чунтан хисеплесе, чĕререн тав туса. Я.Ухсай». Атте мана кукамай çинчен каласа кăтартатчĕ. Ырă чунлă, çӳллĕ те йăрăс пӳллĕ пулнă вăл — сакăр вуннăри кукамай. Амăшне пăх та хĕрне ил тесе ахальтен каламан-тăр ĕлĕк.

Эпир çуралсан аттене улма-çырла пахчинче пĕчĕк пӳрт лартса панă, ан тив, ĕçлетĕр вăл унта, ачасенчен уйрăм лартăр.

Атте ялта чухне Шупашкарти пуçлăхсем ăна манатчĕç. Пылчăкра, виççĕмĕш сортлă çынсем хушшинче пурăнтăрах Ухсай тетчĕç пулас. Çапла ĕçленĕ вĕсен стандартлăх инстинкчĕ.

Тĕрлĕ уявсенче, юбилейсенче вара халăх тарçисем яланах Ухсай халăхран тухнине палăртма юрататчĕç. Атте вĕсене хирĕçлетчĕ. «Халăхран уйрăлман эп, яланах халăхпа пĕрле пулнă», — тетчĕ.

Атте хулана таврăнсан вара килте чăн-чăн уявччĕ. Савăнаттăмăр, шӳтлеттĕмĕр. Атте эпир рояль каланине юратсах итлетчĕ. Эпир вĕçĕмсĕр гамма выляни аннене йăлăхтарсах çитернĕччĕ. Кайран анне вăл рояле сутса ячĕ. В.А.Ходяшев композитор ун вырăнне пире пианино туянса пачĕ. Ăна атте пӳлĕмне лартрĕç. Атте вара хăй ĕç пӳлĕмĕнче чухне те пире пианино калама чармастчĕ. Эпир вылякан гаммăсем аттене кансĕрлеместчĕç. Паянхи кун та çавăн пекех шутлас килет.

Лайăх астăватăп: вăхăтран вăхăта пирĕн çемье уявĕсем пулатчĕç. Атте патне пĕр-пĕр çывăх тусĕ килет-и, кĕнеке тухать-и вĕсен е театрта пьеса йышăнса спектакль лартаççĕ — ун пек чухне хăнасем пыратчĕç. Сăвă-юрă, шӳткулăш тăратчĕ вара килте çав самантсенче, анне вĕсене пулăпа сагăран* пĕçернĕ кукăльпе (аннен патша кукăлĕ) сăйлатчĕ. Çав кукăле анне хăй кăна пĕлекен меслетпе пĕçеретчĕ. Анне алă ĕçĕ тума, юрлама юрататчĕ. Кăкăр тĕпĕнчен тухакан илемлĕ сасăпа юрлатчĕ вăл. Халĕ мана ун çинчен Анна Герман сасси асилтерет. Сăнран пăхма анне ытлашши илемлех те пулман-и тен, анчах утмăл турат чечекĕ тĕслĕ куçĕсенче ялан хĕлхем вылятчĕ, кăпăшка çӳçĕ вĕлкĕшсе тăратчĕ. Кулли питĕ çепĕç те ăшăччĕ унăн. Маншăн тесен — вăл чи хитре çынччĕ. Аттешĕн те çаплах пулнă.

Кăмака хутсан та сивĕ,
Вĕри чей ĕçсен те сивĕ,

* Саго — çĕр улми çăнăхĕнчен тунă кĕрпе.

Кĕрĕк тăхăнсан та сивĕ
Пĕр-пĕччен чухне мана.
Ăшăнăп, чуна вут тивĕ
Савнă чун килсен кăна.

Атте хулара нумай пурăнмастчĕ, вăл Карач шăплăхĕнче лайăх ĕçлетчĕ, ялта юлташсем сахалтарах пулнă.

Атте маншăн чи ырă çын пулнине эпĕ яланах туйса тăнă. Çемье тусĕ Шарик хăйĕн кун-çулне пире парăнса, юратса пурăнса вилнĕ хыççăн эпир пурте макăртăмăр.

Çавăн чухне пĕрремĕш хут асăрхарăм: атте куçĕнчен те куççуль тумламĕсем шăрçаланса тухрĕç. Ун чухне пирĕн пурнăçра ытти енчен пурте йĕркеллĕччĕ. Лёля аппа сывăччĕ, пирĕншĕн хытă тăрăшатчĕ, эпир те Ленăпа иксĕмĕр атте-анне хӳтлĕхĕнче савăнса ӳсеттĕмĕр. Вĕсем хăйсем те ĕç ăнăçса пынине кура тата ытларах тимлетчĕç литература каçалăкĕнче. Анчах атте куççуль кăларнине эпĕ урăх нихçан та курман.

Анне Карачра çĕнĕ çурт лартма шутларĕ. Пирĕн икĕ пĕчĕк пӳрт пулнă: аннен, аттен ĕç пӳлĕмĕсем. Майсем те çителĕклĕччĕ ун чухне тахçанхи тĕллеве пурнăçлама. Анчах анне çурта тутарса пĕтерейменрĕ: ăна вĕлерчĕç.

Ирхине атте, яланхи пек, анне патне пырса сывлăх суннă, анне вара аттерен шыв ĕçтерме çеç ыйтса ĕлкĕрнĕ. Аттене айăплама хăтланчĕç. Эпĕ виçĕ кун хушши тупăк патĕнчен ниçта уйрăлми лартăм. Аттене вара юлашки самантра çеç илсе пычĕç.

Анне тупăкне лартнă клубран масар çинелле кайнă чухне те атте пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Начарланса кайнă питĕнчи икĕ куçĕ кăна вут-хĕм сапса тăратчĕ. Вĕсенче — чун ыратăвĕ, терчĕ-нуши курăнатчĕ. Унашкал куççем макăрма пултараймаççĕ.

Тен, вăл вăтăр çиччĕмĕш çулсенчи йывăрлăхсене аса илчĕ пулĕ?

...Аттене тĕпченĕ, хĕненĕ. Тăнне çухатнă хыççăн ăна вутă тиенĕ машинăпа тĕрмене ăсатма тăнă. Çул çинче атте машина çинчен ӳкнĕ. Унăн пĕçĕ тĕпĕ хуçălнă. Ăна тĕрме камерине илсе пыраççĕ. Ури шыçса кайнăскерне пăхма тухтăра чĕнеççĕ. «Вилен тĕк вил», — тет ăна тухтăр.

Атте пульницăра тăна кĕрет.

Ун чухне те ăна халăх тăшманĕ тесе айăплама тăнă. Юрать-ха, унăн пульницăран тӳрех Мускава çитсе ӳкме май килнĕ, лере вара А.Фадеевпа А.Твардовский тата Демьян Бедный ун хутне кĕнĕ, урине сыватма тата «халăх тăшманĕ» ятне сирме пулăшнă.

Анне мана хӑй аттене вӑрҫа ӑсатни ҫинчен каласа пани аса килет. Куҫӗсенче калама ҫук пысӑк тунсӑхчӗ тет аттен: кил тунсӑхӗ, туссен тунсӑхӗ, ҫӗршыв тунсӑхӗ...

Хальхинче вара атте хӑй аннене ӑсатрӗ. Таврӑнмалла мар ҫула...

Масар ҫинчен аттене каллех илсе кайрӗҫ. Ӑҫта вӑл, мӗнле — эпӗ нимӗн те пӗлмен. Ҫапах та вӑл пӗтӗмпех ирӗкре маррине, ҫын аллинчине ӑнланаттӑмӑр. Хама та кунсеренех прокуратурӑна чӗнетчӗҫ. Сӗтел хушшине ларнатчӗҫ, аннен тӗрлӗ майлӑ ӳкернӗ сӑн ӳкерчӗкӗсене сарса хуратчӗҫ, ыйтусем паратчӗҫ. Ун чухне те ҫаплах калаттӑм, халӗ те ҫаплах калатӑп: атте айӑплӑ мар унта.

Аннене авӑн уйӑхӗнче вӗлерчӗҫ. Ҫурла уйӑхӗнче эпӗ шӑпах Карачра каникултаччӗ. Пахчара чечексем ешеретчӗҫ. Ҫуркунне черченкӗ нарцисс тухатчӗ, унтан капмар тюльпан ҫурӑлатчӗ. Сирень ҫурӑлни ҫу кунӗсем пуҫланнине пӗлтеретчӗ. Тӗттӗм симӗс ҫулҫӑллӑ, кӑпӑшка шурӑ сиренӗн шултра сапакисем таврана ырӑ шӑршӑ сарса ларатчӗҫ. Тӗмӗсем питӗ хунаса кайнӑран вӗсене касас шухӑш та пурччӗ пирӗн, анчах нихӑшӗн те алли ҫӗкленейместчӗ. Ялти каччӑсем кӑна хӑйсен пикисем валли хуҫатчӗҫ вӗсене. Лёля аппа чечексене питӗ юрататчӗ. Вӑл хӑйӗн пӗчӗк пахчинче тӗрлӗрен георгинсем ӳстеретчӗ. Чечекӗсем унӑн питӗ хитре те кӗрнеклӗччӗ. Хӑй те вӑл пурнӑҫра кирек мӗнле ӗҫе те юратса, тӗплӗ тӑватчӗ, шкулта та ачасен сума сӑвакан учительнициччӗ вӑл. Ҫавна кура чечекӗсем те питӗ паркаччӗ унӑн.

Анне вилсен тепӗр ҫултан Лёля аппа та леш тӗнчене ӑсанчӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн хӑш-пӗрисем Карач шкулӗнче вӗрентнӗ Муромцевсен кил-йышӗ ҫинчен ним те ан асилтертӗр тесе хытӑ тӑрӑшрӗҫ. Марийӑпа Якку Ухсайсем ҫинчен те мантарасшӑн пулчӗҫ. Пултарулӑх храмне пӗтерчӗҫ.

Атте пӳрчӗ садра, чиесемпе сливӑсем хушшинче, пӳрт умӗнче вара пӗр тӑваткал пушӑ вырӑн хӑварнӑччӗ, унта атте уҫӑлса ҫӳретчӗ. Кайран анне ҫак вырӑнта чечексем лартнӑччӗ, вӗсем курӑк хушшинче ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен Альп ҫаранӗ евӗр ҫурӑлса тӑратчӗҫ. Вӗсене атте те килӗштеретчӗ, вӗсен таса илемӗнчен тӗлӗнетчӗ.

Пӗррехинче, кӗр еннелле сулӑнсан, эпӗ пусма ҫинче «владимирски» текен сортлӑ ҫӳллӗ чие йывӑҫҫи тӑрринчи ҫырлана ҫисе лараттӑм. Ҫав вӑхӑтра аттепе анне пахчана тухрӗҫ. «Курсам, Якку, мӗн тери хитре чечек!» — терӗ анне. «Эсӗ, кирек мӗн кала та, ҫав чечекрен те хитререх», — терӗ ӑна атте ӑшшӑн ҫупӑрласа илсе. Ку тӗрӗсех

ёнтĕ. Анне мана шкула каяс чухне çепĕç сасăпа ыйхăран вăрататчĕ. Пĕшкĕнет, аллипе ăшшăн перĕнсе илет, питрен чуптăвать: «Хĕрĕм, тăрсам...» Хăйĕнчен темĕнле ырă та ăшă варкăш килет. Атте те хăй аннене мĕнле хисепленин туйăмне пĕр лирикăллă сăвăра аван уçса кăтартнăччĕ:

Эпир санпа каçман ахаль уй урлă,
Пĕрле пурнатпăр иккĕн çирĕм çул хушши,
Пĕрле ĕçленĕ, анлă пурнăç курнă,
Пĕрне-пĕри парасшăн пулнă чун ăшши.

Телей те пирĕн пулнă, пулнă терт те пирĕн,
Усал çынсем кăларнă сивĕтме элек,
Анчах яштак пĕвне паян та тӳррĕн
Тытатăн эсĕ çамрăк йывăç пек.

Питӳ çеç пĕркеленнĕ сан пăртакçă,
Анчах ан çун, ан тарăх ун пирки:
Унта çулсем, кунсем хуллен çырса пыраççĕ
Курса ирттернĕ пысăк пурнăç кĕнеки.

Ăна курса вулатăп эпĕ иккĕн ирĕк
Юратнине, вара кĕртес килмест сăвва
Силленнĕ майăн шăлтăр-шăлтăр чашăк-тирĕк
Хутран-ситрен килте хускатнă шăв-шава.

Каллех те манăн ĕлĕкхин пек çамрăк каччă
Пулса вăййа тухасчĕ пĕр самант кăна,
Савни суйлас пулсан вĕри чĕре хăвачĕ
Каллех, хальхи пекех, юратĕччĕ сана.

...Атте киле питĕ улшăнса таврăнчĕ. Чĕлхи те çĕтрĕ, сасси те çухалчĕ. Эпĕ яланах ĕçлекен аттене халĕ сехечĕ-сехечĕпе сĕтел хушшинче нимĕн курмасăр ларнине асăрхатăп. Сыпкалама тытăнчĕ. Эпĕ кĕнине курсан кĕнеке вуланçи тăватчĕ е сĕтел çинчи ал çырăвĕсене вырăнтан вырăна куçаркаласа ларатчĕ. Чăнах та, айăпсăр çĕртен айăплама тăни çынна питĕ кӳрентерет, кăмăла хуçмаллипех хуçса хăварать. Мĕнле хăватпа тӳссе ирттерчĕ çакна атте — пĕлместĕп. Анчах инкеке çĕнтерчĕ-çĕнтерчех. Эпир ăна нимпе те пулăшаймарăмăр, вăл хăех чун вăй-халĕ тупса пурнăç йĕркине кĕчĕ.

Атте час-часах калатчĕ: «Ан çӳре унта, хĕрĕм. Унта аннӳне тĕп турĕç, сана та шеллесе тăмĕç». Миçе çул иртрĕ! — çапах манма çук. Анне вилни вунă çул иртсен унăн вил тăприйĕ çинче пĕрремĕш хут макăрмарăм эпĕ. Атте ун вил тăпри çине пĕрре те каймарĕ. Анчах ăна вăл нихăçан та асĕнчен кăларман, яланах унпа пĕрле пулнă. Эпĕ аттерен

хăйса ыйтнăччĕ: «Атте, çынсем аçу мĕншĕн авланмасть теççĕ?» «Ачам, аннӳ пекки урăх никам та çук, урăххи мана кирлĕ мар», — терĕ атте. Кайран ку сăмаха эпир нихăçан та хускатман. Анне çĕре кĕнĕ хыççăн атте вун çичĕ çул пурăнчĕ.

Аттен, пире юратни-хĕрхеннипе пĕрлех, пирĕнтен çирĕп ыйтасси те пурччĕ. Эпир кун йĕркине мĕнле пур-нăçласа пынине пăхсах тăратчĕ вăл. Ирсерен сивĕ душпа çăвăнаттăмăр, çурăма тӳрĕ тытса çӳреме хăнăхаттăмăр, çăмăллăн утма тăрăшаттăмăр. Çаксене йăлтах вăл вĕрентнĕччĕ пире.

Каярахпа мăнуксем çуралчĕç, вĕсемпе вăл хăйне çемçерех тытатчĕ, мана та ытлашши ывăнасран сыхлатчĕ.

Хăйне май интереслĕ кукашшĕччĕ вăл. Мăнуксемпе яланах пĕр чĕлхеллĕччĕ тата. «Атте, мăнукна иртĕхтерсе ратăн капла», — теттĕм эпĕ. «Çук, — тетчĕ вăл, — ăнланма тăрăшнипе ача пăсăлмасть, сивĕ сăмахпа вара чунĕ хуçăлать». Çамрăксем начар теççĕ халь час-часах. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест, ашшĕ-амăшĕ мĕнле, ачисем те çапла. Эпĕ çакна хăнăхса çитнĕччĕ, енчен хам ĕçрен таврăннă çĕре Андрюша унăн пӳлĕмĕнче урок туса ларать пулсан, вăл мĕнле те пулин айăпа кĕнĕ, çавăнпа ăна кукашшĕ хăй хӳтлĕхне илнĕ. Енчен те кăнтăрлахи вăхăтра ывăлăм ун вырăнĕ çинче çывăрать пулсан, вара Андрюшенька чирленĕ, çавăнпа кукашшĕ ăна çывăратнă. Ыйхă çынна сывалма пулăшать тетчĕ атте.

Андрей шкулта лайăх вĕренетчĕ, кукашшĕ вара ун дневникне хаваспах алă пусатчĕ.

Инçе çул-йĕре малтан вĕсем аннепе çӳретчĕç, кайран, ывăл уралансан, аттепе пĕрле эпĕ çӳре пуçларăм. Аттен çулçӳревĕ тĕлĕнмеллеччĕ. Çулçӳревре атте творчество çыннисемпе тĕл пулатчĕ. Унăн кирек ăçта та тус-юлташĕсем нумайччĕ. Аттене Пушкăрт çĕрĕ яланах чĕнсе-йыхăрса тăратчĕ. Эпир унта çулла, куккук авăтнă вăхăтра, каяттăмăр. Çав тапхăр — çут çанталăкăн чи капăр, чи килĕшӳллĕ вăхăчĕ тетчĕ атте. Ачалăхĕн сукмакĕсемпе атте ывăнма пĕлми хастар утатчĕ. Эпĕ каçа хирĕç йăлтах ывăнса çитеттĕм, ураран ура иртейми пулатчĕ, вăл пур — хăй патне курма пыракан çынсемпе çĕрĕпех халап çаптарса ларма та хатĕрччĕ.

Ирпе ирех вăрататчĕ атте мана. Чинавье аппа патĕнче пултăмăр пĕррехинче. Вăл, Кĕçтенттин Ивановпа пĕр çулхискер, самаях ватă, çапах та тĕреклĕ карчăкчĕ. «Якку, эпĕ сана эс йĕм тăхăнмасăр çӳренĕ вăхăтранпах лайăх ас-

тăватăп», — тет Чинавье аппа. Чăнах та, атте çине пăхатăп та, аппа калакан ача майлах вăл: кĕре ӳтлĕ, тăн-тăн, пысăк хăмăр куçĕ, вăрăм куç харшийĕ имену́ хĕлхемне пытарать. «Эсĕ, Якку, халĕ те çавăн чухнехи пекех, пуçу кăна, ача чух çăхан çунатти пек йĕпкĕн хураскер, кăвакарса кайнă».

Атте чирличчен çулталăк маларах Пушкăртстана çимĕке кайсаттăмăр. Ахăртнех, хăй тăван çĕршывне юлашки хут кайнине атте чунĕпе сисетчĕ пулмалла. Çавăн чухне вăл мана Кĕслету патне илсе пычĕ, хăйне çавăнта пытарасси пирки сăмах хускатрĕ.

Ку хутĕнче çуран çӳреймерĕмĕр, хамăрăн машина пулчĕ. Ытларах Чипикаранта пултăмăр, Ивановсен тăванĕсем патне кĕтĕмĕр. Эпĕ Ивановсен таврашĕн темиçе ăрăвĕ канăçса выртакан масар çине кайрăм, атте ура ыратнипе пыраймарĕ, хăш тăвана хăш тĕлте тупса пуç таймаллине кăна каласа ячĕ. Хăй питĕ пăшăлккăччĕ вара çав самантра, куçĕ калама çук тунсăхлăччĕ.

Каçхине пĕтĕм хурăнташ пухăнчĕ. Пĕр пек сăнлă: хăмăр куçĕсем тăрăх, хитре авкаланчăклă тутисем тăрăх кам таврашĕ пулнине тӳрех тавçăрса илме пулать. Пăхма ырханкка та шăнăрлă хăйсем, хусканăвĕсем питĕ йăрă, шӳте лайăх  ăнланаççĕ, илем тĕнчине аван чухлаççĕ.

Акă кĕмĕл уйăх таврана çутатса ячĕ. Юрăсем янраса кайрĕç. Çимĕк йăли çапла кунта. Эпĕ те атте ирĕк панипе çимĕке тухрăм, халăхпа утрăм. Ял тăрăх туран анаталла а капелла йĕркипе авалхи чăваш юррисене юрласа анаççĕ. Юррисенче темĕнле асамлă вăй-хăват сисĕнсе тăрать. Эпĕ тĕлĕнмеллипех тĕлĕнетĕп пурнăçри çак хăйне майлă операран, аттене те юлашки вăхăтра нихçан та ун пек хаваслă курманччĕ.

Халĕ кунти вăрмана касса пĕтернĕ, вăл сайраланса, çаралса юлнă. Хитре шурă хурăнсене каса-каса ĕне картисем тунă, тăрăхăн-тăрăхăн сыпăнтарса çапса хунă хурăн вуллисем куççуль кăларнăн туйăнаççĕ. Юнашарах — турат куписем, турпас тавраш. Силпи шывĕнче мазут кăваккăнсимĕссĕн явăнса çӳрет, пулă сахалланă. Çут çанталăк шайлашăвĕ сумран тухать.

Чăваш тăрăхĕнче те лару-тăру çавнашкалах. Çакă аттене питĕ пăшăрхантаратчĕ. Чĕрре кĕрсе хӳтĕлетчĕ вăл тăван çĕре, юхан шывсемпе вăрмансене. Миçе статья çырман пулĕ вăл çак ыйтусемпе...

Акă вĕсенчен хăшĕсем: «Когда равнодушие становится преступлением», «Была Кубня красивой», «Трагедия

малых рек», «О лесах, водах и заводах», «Когда земля плачет», «Как Чебоксарка впадает в Волгу». Аттен ҫак ӗҫӗсем-статйисем паянхи кун та пӗлтерӗшлӗ. Атте калатчӗ: «Ҫут ҫанталӑк чӗрӗ, эпир унӑн пӗчӗк пайӗсем. Ҫут ҫанталӑк пире ҫуратать, усрать, хӑй аллине илет, кайран каллех чӗрӗлӗх кӳрет. Ҫут ҫанталӑкӑн саккунне пӑсма юрамасть...»

«Сейте разумное, доброе, вечное». Аркадий Айдак — чӑн-чӑн ҫӗр хуҫи. Аттен акнӑ вӑрлӑхӗсем Айдак ҫӗрӗ ҫинче вырӑн тупнӑ, шӑтса тухнӑ. Кунта вара атте хӑйӗн ӗмӗчӗ-шухӑшӗ пурнӑҫа кӗрсе пынине курса хӗпӗртерӗ. Аркадий Айдак ертсе пынипе ҫынсем ҫырма-ҫатра ҫулне пӳлме ҫӗкленни, йывӑҫсем лартса ӳстерни, ку тавраран писнӗ чӗр чунсене каялла тавӑрни, ӳсӗр ҫынсем ҫукки калама ҫук савӑнтарчӗ ӑна.

Мускава каймаллисем пулатчӗҫ. Эпӗ пӗрремӗш ҫулҫӳревсене аса илетӗп. Атте Мускав хулине лайӑх пӗлетчӗ. Кӗнеке издательствисенче, Писательсен союзӗнче пулаттӑмӑр. Лифтпа ҫӳреместчӗ вӑл. Эпӗ ун хыҫҫӑн аран-аран ӗлкӗрсе пыраттӑм. Кашни этажрах вӑл паллакан журналистсене, редакторсене, ӗҫпе ҫывӑх ҫынсене тӗл пулатчӗ. Ҫав самантсемпе усӑ курса урасене кантарса илеттӗм эпӗ. Каҫхине атте патне тус-юлташӗсем килетчӗҫ, ирччenex пултарулӑх ыйтӑвӗсемпе калаҫса ларатчӗҫ.

Пӗр каҫӗ уйрӑмах асра юлчӗ: ун чухне Николай Старшиновпа (сӑвӑҫ-куҫаруҫӑ) атте иккӗшӗ гитарӑпа питӗ хавхаланса юрларӗҫ. Каласа пама ҫук аван шӑрантарчӗҫ вӗсем хӑйсен юратнӑ кӗввисене.

Хамӑр куҫсемпе курмалла ӑна! Юлашки ҫулҫӳревсенче атте ывӑна пуҫларӗ, ури ырататчӗ, нумай ҫӳреме памастчӗ. Тусӗсемпе тӗл пулсан пурпӗрех ывӑнни те, чирӗ-чӗрӗ те таҫта кайса кӗретчӗ унӑн: шӳтлетчӗ, сӑвӑ калатчӗ вӑл, юрлатчӗ...

Пӗррехинче Мускавра «Россия» хӑна килӗнче, РСФСР Писателӗсен съезчӗ вӑхӑтӗнче (1985), каҫхине аттен пырӗнчен юн кайма пуҫларӗ. Эпӗ (вӑй-хал ӑҫтан тупӑнчӗши?) холодильникран пӑр катса илтӗм, аттен кӑкӑрӗпе хырӑмӗ ҫине хутӑм. Кӳршӗсем патне шаккарӑм. Кӳршӗ икӗ тем пысӑкӑш гранат илсе пычӗ, сӗткенне кӑларчӗ, пӑр ярса ӗҫтерчӗ. Хальхинче йӗркеллех иртсе кайрӗ. Ирпе ирех аттен фронтри ҫывӑх юлташӗ журналист Николай Ефимов пычӗ. Чылай калаҫса ларчӗҫ вӗсем. Ефимов вӑл калаҫӑва пӗтӗмпех магнитофон ҫине ҫырса илчӗ.

Атте хӑйӗн нушисем ҫинчен, мӗн те пулин ыратни-кансӗрлентерни ҫинчен калама юратмастчӗ. Чӑрманта-

расшăн марччĕ вăл çынсене унашкал ыйтусемпе. Çаплаччĕ унăн кăмăлĕ. Çынсемшĕн тем те тума хатĕрччĕ, хăйне пачах та аса илместчĕ. Çакна ăнланакансем аттене яланах ырă ĕçпе хута кĕретчĕç.

«Этем» сăмах пире çак ята тивĕçлĕ пулма хистет.

1961 çулхи чӳк уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракасси (Эльбарусово) шкулĕ çунса кайрĕ. Шкулпа пĕрле — 105 вĕренекенпе 4 вĕрентекен. Ку трагеди хыпарне вăл вăхăтра халăхра сарăлма памарĕç.

Ухсай вăл вăхăтра Чăваш АССР Аслă Канашĕн депутачĕччĕ. Канаш районĕнчи Сиккасси округĕнчен суйланăччĕ ăна. Сиккассинче те 1887 çулта лартнă йывăç шкулччĕ. Сиккасси ялĕнче те Эльбарусоври пек хăрушă трагеди ан пултăр тесе атте кирпĕчрен çĕнĕ шкул çурчĕ лартас ыйтăва хускатрĕ. Анчах çӳлтисем килĕшесшĕн мар, укçа çукки çине йăвантараççĕ.

Çав вăхăтра Ухсайăн Мускав издательствинче «Кĕлпук мучи» кĕнеке тухрĕ. Çав кĕнекен гонорарне вăл пĕтĕмпех Сиккасси шкулне лартнă çĕре пачĕ. Çапла вара Сиккасси шкулĕ — «Кĕлпук мучи» шкулĕ.

Пуçаруллă пулни пирĕн çĕршывра хамăрах сăтăр тăвать, ырă ĕç туни — тата ытларах сиенлет: урăхран Ухсая Аслă Канаша суйламарĕç. Хам илтнĕ пĕр калаçу аса килет. Эпир аттепе хуларан таврăнтăмăр, кил хушшинче Борис Марков, Максимов-Кошкинский, Петр Филиппов калаçса тăраççĕ.

«Якку, кунта кил-ха, — тет Борис. Хăй питĕ пăлханчăк кăмăллă. — Чăвашсен оперăпа балет театрĕ пултăр тесе эпĕ пурнăçа патăм, çӳлтисем вара мана çавăншăн выговор пачĕç, ĕçлеме памаççĕ», — тет Борис Семенович. Иоаким Степанович, хура-шурне сахал мар курнă çын, кулса ячĕ те çапла каларĕ: «Эпĕ Чăваш академи театрне йĕркелесен мана тĕрмене хупрĕç».

Тӳре-шаран влаçĕ вышкайсăр пысăк. Талантлă çыннăн чунĕ çепĕç. Çемçе пукан çинчи тĕссĕр пуçлăх талант чунне ĕмĕрне те ăнланаймасть. Ăслă, талантлă çын ыттисене хăй шайне çĕклеме тăрăшать, айваннисем вара ăслисене хăйсен шайне антарасшăн.

Аттен вăйĕ-халĕн тупсăмĕ пирки тем чухлĕ шухăшласан та вĕçне-хĕрне тухса пĕтерейменрĕм эпĕ: унăн хевтимехелĕ пур енĕпе те вышкайсăр анлăччĕ. Нумай калаçнă эпĕ унпа, анчах, халь шухăшлатăп та, вăл мана чи кирлине, чи пĕлтерĕшлине каласа çитерейменрĕн пек туйăнать. Чунĕ-чĕринче мĕнле туйăм хуçаланнине куçĕнчен пăхса

ăнланма тăрăшаттăм эпĕ. Çав хушăрах вăл та мана витĕрех курса тăратчĕ. Çавăнпа та пурнăçра унран мĕн те пулин пытарса хăварасси пирки шухăшлама та кирлĕ марччĕ, вăл пурпĕрех пĕлетчĕ, ăнланатчĕ.

Мускава онкологи центрне кайсан çеç пĕр-пĕрне кăштах «суйма» пултартăмăр пулас: «Атя киле каяр, хĕрĕм, кунта çӳреме сăлтав çук пирĕн, — терĕ мана атте. — Килте ахаль те ĕç нумай...» Врачсем атте тăвата уйăхран вилме пултарасса систерчĕç. Атте сакăр уйăх пурăнчĕ...

Пĕррехинче атте мăкăртатса илчĕ: «Ĕмĕр тăршшĕпех ĕçле, ĕçле, ĕçле, ĕçле...» Эпĕ ăна: «Атте, сана пач ĕççĕр тăратса хăварас пулсан мĕн калăттăнччĕ-ши эсĕ?»

Атте питĕ çăмăллăн ĕçленĕ пек туйăнатчĕ мана. Хушăран унăн ĕçĕ садра юрлакан шăпчăк кĕвви-çемми пек ансаттăн тухать пулĕ теттĕм эпĕ. «Саншăн, атте, пĕтĕм пурнăç — киленӳ, шăрантар та шăрантар. Турри хăй çапла çырнă», — теттĕм. Çут çанталăк пехилĕсĕр нимĕн те тăваймăн çав. «Кăкăр сĕчĕпе кĕменнине вăкăр шăкĕпе илеймĕн», — тетчĕ ун пек чухне атте.

Çапах та талант тени ĕçре аталанать. Ăсталăха яланах тупас пулать. Атте хăшĕсем «килсем, килсем хавхалану саманчĕ» тесе тархасланинчен кулатчĕ. Хавхаланăва ĕçпе чĕнсе илмелле тетчĕ вăл. Акă мĕнле çырнăччĕ вăл поэзин асамлăхĕ çинчен:

Хĕвелсĕр пӳлĕм ешĕл сад пек пулса кайĕ,
Çурса хăпарĕ çулçă ручка авринчен,
Шăратĕ юррине çунат сарса сар кайăк
Сасартăках редактор сĕтелли çинче.

Атте мĕнле ĕçленине пĕлес тесен унăн ал çырăвĕсемпе паллашмалла: мĕнле тăрăшса, тимлесе тӳрлететчĕ вăл хăй çырнине. Ĕç ăна хăех хавхалану кӳретчĕ, савăнăçне паратчĕ, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшатчĕ.

Чирлесен, ĕçлейми пулсан аттене йывăрччĕ. «Хĕрĕм, ĕçлейми пултăм вĕт?» — тетчĕ вăл. Каçару ыйтнă пек, айăплăн туйнă пек калатчĕ. Этем ĕççĕр пурăнма пултарнине ниепле те ăнланаймастчĕ вăл.

Мĕн вăйĕ çитнĕ таран ĕçлерĕ вăл хăй ĕмĕрĕнче. Чирĕпе çирĕппĕн, салтакла кĕрешрĕ, ăна ĕçпе çĕнтерсе пычĕ. Çапах та юлашкинчен алли ăна пăхăнми пулчĕ. Сывă мар çынсем чылайăшĕ хăвăрт çилленсе каяççĕ, тарăхаççĕ, атте ун пек марччĕ, «Сана йывăр пуль, хĕрĕм», — тетчĕ, хĕрхенетчĕ. «Çук, атте, санпа чухне ним те йывăр мар мана», — теттĕм эпĕ. Хăйне хĕрхеннине, пулăшнине хăнăхман вăл.

Эпĕ ăна йывăррине сисеттĕм, эмелсем параттăм. «Тавтапуç, ачам», — тетчĕ вăл. Анчах эмелне хăй ыйтмастчĕ, чăтса ирттерме тăрăшатчĕ. Çĕрле, чăтма çук ыратнă вăхăтра, атте калатчĕ: «Лар, ачам, чĕнтĕр çых, крючок мĕнле вылянине курсан çăмăлрах», — тетчĕ. Эпĕ юнашар лараттăм, чĕнтĕр çыхаттăм, ăна темĕн çинчен те каласа кăтартаттăм. Вăл итлесе выртатчĕ. «Философ иккен эсĕ», — тетчĕ мана.

Çапла пĕрле ирттерсе яраттăмăр чир-чĕре. Калаçнăçемĕн кăмăлĕ çемçелетчĕ аттен, куçĕ кула пуçлатчĕ.

1986 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче çĕрле йăлтах вăйсăрланса çитрĕ вăл. Çав каç пирĕн Лена, ман йăмăк, Мускавран хăй килĕ-йышĕпе Шупашкара килме тухнă. Атте ун çинчен пĕлетчĕ, кĕтетчĕ. Çур çĕр иртсен вăл: «Пуйăс киличчен тата миçе сехет юлчĕ?» — тесе ыйтма тытăнчĕ. Ирхине пиллĕкре çывăрса кайрĕ, ыратни лăшланчĕ. Хăнасем çитрĕç, вара атте вăранчĕ. Кил-йыш пĕр çĕре пухăннишĕн вăл питĕ хĕпĕртерĕ, куçĕ йăлтăр çутăпа çиçме тытăнчĕ. Шалта, куç тымарĕнче, пурпĕрех ырату сисĕнетчĕ.

Лена хăй çемйине Кăкшăмри кану çуртне вырнаçтарма илсе кайрĕ, каçалапа таврăнма пулчĕ. Атте, хавхаланса ўкнĕскер, питне çуса яма, сухалне хырма ыйтрĕ, апатра пĕр турилкке шўрпе çирĕ. Эпĕ ăна çапла маттур пулнăшăн мухтарăм. Вăл та эпĕ пĕçернĕ яшкана ырларĕ.

15 сехетре унăн сывлăшĕ пўлĕнсе килчĕ. Эпĕ часрах васкавлă пулăшу чĕнтĕм. Килчĕç, укол турĕç. Хĕрарăм тухтăр каларĕ: «Каяс сехечĕ çывхарать пулмалла», — терĕ. Атте, çивĕч хăлхаллăскер, илтрĕ: тухтăр çине витĕррĕн пăхса илчĕ. Эпĕ йĕрсе ятăм. «Атте, эпĕ сан умра питĕ айăплă, пурнăçра сана нумай хурлантартăм», — терĕм. Аçуна пăлхантаран тесе тухтăр ятлама пикенчĕ. Атте мана алăран тытрĕ те: «Çук, хĕрĕм, эсĕ — лайăх», — терĕ.

Эпĕ атте умĕнче куççуль кăларма та пултарнă. Вăл мана яланах ăнланнă, каçарнă. Вăйлă çын çумĕнче эпĕ хама вăйсăр туйма та ирĕк панă. Унтан вăл кăштах канса илемха тесе куçне хупрĕ, хуллен ыйха путрĕ. Тухтăрсем кайрĕç. Тăватă сехет çитеспе вăранчĕ вăл. «Сывлама йывăр», — терĕ. Эпĕ ăна кислород патăм — çитмерĕ. «Халех илсе килеççĕ», — терĕм. Вăл ямарĕ. «Лар, хĕрĕм», — терĕ. Эпĕ юнашар лартăм. Атте аллине ман çине хучĕ, эпĕ унăн аллине хам алла илтĕм. Куçран пăхрĕ. Ахăртнех, манпа çапла сывпуллашрĕ пулмалла. Акă унăн куçĕ тĕксĕмлене пуçларĕ, таçта пĕр кĕтесре кăна пурнăç хĕлхемĕ çиçсе илчĕ, кĕçех пусă шывĕ пекех тарăна кайрĕ, унтан атте

пачах сывлама чарӑнчӗ, алли хускалнӑ пек пулчӗ, манпа ҫапла сывпуллашрӗ ӗнтӗ, унтан куҫӗ хупӑнчӗ.

Ҫав вӑхӑтра кислород илсе пычӗҫ, эпӗ ӑна часрах аттене патӑм, вӑл пӗр хут анчах сывласа илейрӗ. Юлашкинчен вӑрӑммӑн сывласа ячӗ те — чарӑнчӗ. Эпӗ, астӑвасса, аннен йӑмӑкӗпе шӑллӗ вилнӗ чухне вӗсем сывлӑша тулалла сывласа кӑларнине асӑрхаса юлнӑччӗ. Атте вара сывлӑша шалалла сывласа илчӗ. Унӑн чӗри утӑ уйӑхӗн 7-мӗшӗнче 16 сехетре тапма чарӑнчӗ.

Атте пирӗнтен уйрӑлса кайнине манӑн халӗ те ӗненес килмест.

Ӗҫрен таврӑнатӑп-и — киле часрах ҫитес килет, аттене кӗттернӗн туйӑнать. Куҫӗсем кӑмӑллӑн йӑлтӑртатнине те куратӑп. Эпир пӗрле, пурте лайӑх та аван! Эпир килте!

Атте хӑйне Пушкӑрт ҫӗрӗ ҫине илсе кайма хушса хӑварчӗ. Ҫаплах ҫырчӗ: «Слакпуҫ ялне, Кӗслету тӑррине пытарӑр. Я. Ухсай». Мана ҫапла каланӑччӗ: «Ман пата пынӑ чухне чечек кӑшӑлӗсем, чечексем кирлӗ мар, тӑпрам ҫине Слак ҫырминчи пӗчӗк ҫавра чулсене илсе килсе хур.

Хӗрӗм, ан макӑр, эпӗ тӳпенелле пӑхса выртӑп, тӳпи вара сенкер-сенкер, ҫӳллӗ-ҫӳллӗ...»

Туссем енчен Ухсай телейлӗ сынччӗ. Юлашки ҫула суйласа илес тӗлӗшпе аттене Семен Матвеевич Ислюков пулӑшрӗ. Халӑх поэчӗн чӗри тапма чарӑнсан эпӗ ун патне шӑнкӑравларӑм. Вӑл ҫийӗнчех вӗҫтерсе ҫитрӗ. Чун сисрӗ: атте ҫумӗнче унӑн тусӗ тӑрать. Вӑл мана мӗн хыҫҫӑн мӗн тӑвассине тӗпӗ-йӗрӗпе ӑнлантарчӗ.

Чи малтан — Пушкӑрт обкомне Ахунзянов патне шӑнкӑравламалла. Унсӑр Ухсая Кӗслету ҫине ярасшӑн пулмӗҫ. Ҫыхӑнтӑмӑр Тагир Исмаиловичпа. Аттене Ислюковпа иксӗмӗр ҫуса тумлантартӑмӑр. Акӑ атте ҫӗре кӗрсе выртрӗ. Ун хыҫҫӑн кӗвӗҫӳ кӗрчӗ ман ҫине йӑтӑнса анчӗ. Малтан — кӗвӗҫӳ, унтан — курайманлӑх. Атте вилсен эпир Семен Матвеевичпа час-часах Атӑл хӗрринче тӗл пулаттӑмӑр, ҫӳреттӗмӗр, калаҫаттӑмӑр. Йывӑр вӑхӑтра эпӗ унтан: «Мӗнле пурӑнмалла-ши?» — тесе ыйтрӑм. «Эсӗ ӑслӑ, шухӑшла», — хуравларӗ вӑл.

Атте юнашар ҫукки — пысӑк хуйхӑ. Анчах мӗн тери пысӑк телей: вӑл — ман атте, эпӗ — унӑн хӗрӗ.

**Ольга УХСАЙ**

*Юпа уйӑхӗн 22-мӗшӗ, 2003 ҫ.*